Делегатсем сĕтортан тăваранăн колхозниксене съот решенийĕсем çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕç, вăйăл тырпулăшăн кĕрешессине хĕрӳлетерĕç.

Халĕ ăмăртакан колхозсем социалисăмла ăмăрту договоркисене тĕрĕслесе тухрĕç.

Договора тĕрĕслесе тухна хыçăн Киров ячĕпе тăракан колхоз çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнине палартнă.

Колхозăн хĕллехи план тăрăх тислĕк 3200 лав, торф 4500 лав уйăх калармала пулăна пулман, тислĕк 5469 лав, торф 8354 лав кăларăна. Кунсăр пуçне çĕре çемçетмели вырăнти удобренисене плантан ытлашшипех пухса хатĕрленĕ. Йăлхуçалăх машинисене пĕтĕмпех йыçăса хатĕрлесе лартнă. Начартарах лашасене уйрăм апат çине тăратнă.

Акмали вăрлăха шăтарса пăхнă тата анализ тунă хыççăн, вăрлăхăн шатаслăхĕ 96 процент пулни палăрнă. Акмали вăрлăха 2 хут сурт-ласа тасатнă. Колхозра пурĕ 8 бригадă, 5 бригадăра комсомолецсем бригадир пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе ăмăртаççĕ. Ăмăртура йăланах Степанова Васса бригади малта пырать.

Договора тĕрĕслесе тухна тăрăх Ушанарсем те çуракине пĕтĕмпех хатĕрленсе çитнине палартнă.

Исайев.

Вăрман хатĕрле вĕ

Вăрман ĕçĕнче малта пыракансем

ЙĔПРЕÇ. Шанкăртам районĕнчи „Ударник" колхоз вăрман хатĕрленĕвĕнчи стахановла уйăхлăхра лайăх ĕçлесе пычĕ. Киязйаков йăлташ ĕçертсе пыракан бригада йăланах плана 200—210 процент таран тултарса ĕçлерĕ. Çавăнпа та вăл бригада членĕсем кашни кун 28-шар тенкĕ уçса ĕçлесе илчĕç.

„Звезда" колхоз членĕ Йумаев йăлташ стахановла уйăхлăхра кашни кунах плана 242 процент тултарса пычĕ.

Çавăн пекех М. Березинпа А. Дружинин йăлташсем те уйăхлăх вăхăтĕнче ĕç нормисене 240 процентшар тултарса пычĕç.

Февралĕн 10-мĕшне мартăн 10-мĕшĕ хушшинче пулса иртнĕ вăрман хатĕрлевĕнчи стахановла уйăхлăхра стахановецсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç, вĕсен йышĕ те чылай ĕçре. Малашне вĕсен опытне йăланах сарса пырасси—вăрманпромхоз руководителĕсен умра тăракан задачăсенчен пĕрийĕ пулмала.

Г. Марушев.

642 кубла метр

ТӲТАРКАС. Мăн-Сĕнтĕр[4] йăлсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 1-мĕш квартăлта 642 кубла метр вăрман кассă хатĕрлесе плана 142 процент тултарчĕ.

Çавăнпа пĕрлех колхоз клубăн вăрăмĕ 150 кубла метр турттăрса хатĕрлерĕ. Халĕ çĕнĕ клуб тума тытăнчĕç.

„Сĕнĕ çул" колхоз та квартăл планне ытлашшипех тултарчĕ.

Орехов.

Вăрман хатĕрлевĕ халĕ те йерипен пырать

Мартăн 15-мĕшне республикĕпе илсен 1-мĕш квартăл планне касса хатĕрлессине 45,7 процент, турттарссине 47,7 процент çеç тултарнă. Уйăрăнах кунта Кире, Вăрнар тата Улатăр вăрманпромхозĕсем чăтма çук начар ĕçлесе пыраççĕ. Акă Кире вăрманпромхозĕн пилĕк кун хушшинче (мартăн 10—15-мĕшĕсенче) хатĕрлессине 0,2 процент, турттарссине 1,3 процент çĕмĕ тунă. Çапла ĕçлесе пынăран та ĕнтĕ вăл мартăн 15-мĕшне 20.620 кубла метр хатĕрлесе квартăл планне пĕтĕмпе те 23,4 процент кăна тултарнă.

Механизацилĕ çулсем те çав тери мĕшĕлтетсе ĕçлеççĕ. Республикĕпе илсен пайăнхи куна квартăл планне 60 процента йăхăн çеç пурăçланă.

Перремĕш квартăл планне тултарма шутлă кунсем йулчĕç. Çак кĕске вăхăтра вăрман хатĕрлен организацисем ĕçе çирĕппĕн йĕркелемесеп, вĕсем тăран прорыва кĕрсе кайасси куç умĕнчех. Çавăнпа та вĕсен пайăнхи задачĕ: вăрманта ĕçлеме çитĕлĕкĕ таран ĕç пăхĕ тăратасси, механизацилĕ тата рационализацилĕ çулсемпе тĕрĕс уçă курасси тата ĕçлекенсенĕ пур условисем те туса парса стахановла йăхăма нихăçанхинчен ытла сарса йăрасси пулмала.

Хăй тĕллĕн вĕренекен института кĕчĕ

Канаш районĕнчи Асла Йикшик шăпчинни Иван Андрейевич Андрейев ача чухне пурнăç начаррипе шкула кайайман. Ситĕнсен тин хăй тĕллĕн вĕренсе, 4-çул шкулта вĕренне чухне пĕлӳ илнĕ. Ун хыççăн рабфакра вĕренсе тухнă. Халь учительччĕ. Халĕ çĕнĕ институтĕнче физикăпа математикă факультетĕнче II-мĕш курса вĕренет. Вĕренӳре вăл лайăх ĕлкĕрсе пырать.

Смирнов.

Ӳкерчĕк çинче: Папанинщăсене Таллинăра (Эстони) кĕтсе илни.
С. Лоскутов фото-ӳкерчĕкĕ (Сойузфотон „Пермак" пăрçăмĕрен çинчи спецкорĕ).

Аш-какай тăратас, вăрман хатĕрлес тата финанс планне тултарас тĕлĕшпе Тутаркас райĕçтăвкомĕ мĕнле ĕçлени çинчен

Чăваш АСС Республикĕн Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1938 çулхи мартăн 15-мĕшĕнче йышăннă

ПОСТАНОВЛЕНИ

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Тутаркас районĕ финанс планне тултарас тĕлĕшпе пиртĕ нумай вăхăт хушши республикăра чи кайри вырăнта тăнине палăртать, сăмахран: йăлсенче куçтусбор тăрăх мартăн 15-мĕшне уçса пухса пĕтермеле пулнă, çак вăхăта 11 процент анчах пухнă (365 пин тенкĕ вырăнне 40 пин тенкĕ пухăннă), йăлхуçалăх налогне 1937 çулхи декабрĕн 20-мĕшне пĕтĕмпех пухса пĕтермеле пулнă, çак вăхăта илсен те 28 процент анчах пухнă (132 пин те 500 тенкĕ вырăнне 36 пин тенкĕ пухăннă). Çавăн пекех ĕç тăрат ытти тӳлевсем йĕнепе те.

Займ çыраннă тăрăх уçса пухас ĕçе ытла та йăпах организацилене. Çак вăхăта илсен, йăлсем тăрăх кăна займ уçăн 106 пин тенкĕ пухăнмасăр йулна шутланат.

Районри организацисем çавăн пек начар ĕçлесе пынине пула, район бюджетне кĕске вăхăтрах (икĕ уйăх çурă) 500 пин тенкĕ ытла пухăнмасăр йулна, çакна пула ĕнтĕ шкулсем, боль ницасем, агроучасткăсем, ветеринари пунктăчĕсем тата ытти-сем те йĕркелĕ уçса илес тăрăмаççĕ.

Шкулсенче, боль ницасенче тата районри ытти учрежденисенче çавăн пек йĕрке пулни, паллах ĕнтĕ, халăхсене кӳрентерет.

Тутаркас районĕнчи руководителсен строителстваă ĕçне сарса пырас кăмăл пур, паллах ĕнтĕ ку строителстабăсем кирлĕ, анчах та райĕçтăвком руководителĕсем строителства вальăн уçасем кирлине, çакна мăй планне тултарас тăрăмăсăр пыма кирлине ăнланмаççĕ пулас.

Тутаркас районĕ 1938 çул вальăн шкулсем тума тата ытти ĕçсене вальăн те нумай уçса-тенкĕ илет. Çĕнĕ шкулсем тăвас ĕçе халех тытăнмала, анчах та финанс планне пĕр майăх тултарăмăсăр пынине пула çак çулхи строителстаă ĕçсĕнне пĕтĕмпех пуриăçлайăс çук хăрушлăх тухса тачĕ.

Финанс планне тултарас тĕлĕшпе районра ĕç çакăн пек таннн тĕп çалтавĕ вăл — Тутаркас райĕçтăвкомĕн руководителĕсем: Калинин, Овчинников тата Магайев йăлташсем пĕр каласа ларнипех плана тултарма çуккине, каласа ларнинчен ĕçе тытăнмалине ăнланмани пулать.

Районра аш-какай тăратас планначар тунса пырать, нумай йăлсоветсем тата колхоз правленийĕсем аш-какай тăратас планна тултарассинчен ăйăкра тăраççĕ.

Район çавăн пекех вăрман хатĕрлес тата турттарас заданисене пурнăçлассине те йăлса пырать.

Районра çак ĕçсем тăрăх йăлса пынине пĕтĕрме пысăк практикăла, организацилене тата массалăхланатару ĕçĕсене туса пыни кирлĕ, йăлсоветсен, колхоз правленийĕсен пĕтĕм ĕçĕсене вăйлатни кирлĕ тата вăл ĕçе районри пĕтĕм актива хутшăнтармала. Çак ӳтĕ-районри совет тата хатĕрлев организацисен ĕçĕсене тĕпренех лайăхлатма хушать.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ Тутаркас райĕçтăвкомĕн руководителĕсене—Калинин, Овчинников тата Магайев йăлташсене вĕсем хăйсем районра ĕçтресене тĕпренех лайăхлатма, районри совет аппаратĕн ĕçне хуçалăхпа-политикăла задачисене пысăк организацилекенне татса пмала туса, йăлсоветсем тата колхоз правленийĕсем партине правительствă район умне тăратнă задачăсене пурнăçлас çĕрте организаторсем пулса тăмала туса, района кĕске вăхăтрах вăл нумай вăхăт хушши пысăк прорывра тăнинчен кăлармала туса йĕркелеме хушать.

Районри ĕçе çуле вырăна лартас тĕлĕшпе практикăла ĕçсене сӳтсе-явма пĕтĕм йăлсовет тата колхоз правленийĕсен председательĕсене чĕнес, йăтарласа райĕçтăвком председателĕн Калинин йăлташăн докладне итлес.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕ Л. Спасов.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн ĕçесене тăваканĕ Н. Жуков.

Халех тумали ĕç

ÇЕРПӲ (хăмăр корр.). Çулĕр строителстви сезонĕ сăмахăрса килет. Тепĕр-нĕ уйăхран ĕççыннисем сурăкшнехи шыв пăснă çулсене, кĕперсене йăсама, çĕнĕ çулсем тума тухаççĕ.

Кăçалхи сезонра Çĕрпӳ районĕнче çулĕр строителстви ĕçĕсем Çĕрпӳне Вăрмар, Аньуевă тата Трак хушшинчи çулсем çинчĕ, Çĕрпӳне Сĕнтĕрвăрри хушшинчи çуа çинчи кĕпере тунă çĕрте пулмала. Тата район хăйĕн умне районшăн кирлĕ çулсене кăçалхи сезонра туса пĕтерес задачă лартнă.

Асăннă ĕçсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртессипе сезона пур ĕнчен те хатĕрленсе кĕнĕччĕ килет. Анчах строителстваă сезонне хатĕрленесси ĕçрипех пырат-ха. Кĕперсем тума тата йăсама 725 кубла метр йăвăç материалсем кирлĕ; 313 кубла метр çеç турттарса тухнă. Пĕтĕмпе 2878 кубла метр чул хатĕрлесе турттармала пулсан, 275 кубла метр хатĕрлесе, 5 кубла метр çеç турттарса кăларнă. Хăйăр хатĕрлесси те начар пырат: 28.590 кубла метр вырăнне, 525 кубла метр çеç турттарнă.

Ĕçе çирĕп йĕрке тумашни пысăк чăрман кӳрет. Районри нумай колхозсенче çулĕр ĕçĕпе кам ĕçлемелине те пĕлмеççĕ. 117 колхозран 45 колхоза çеç çулĕр ĕçĕпе ĕçлеме бригадăсем уйăрнă. Чылай колхозсенче производствă планне тунă чухне çулĕр строителствине ĕçлемели вăхăта чăкараççĕ. Районри çулĕр тата çĕрĕç пайĕн ку йăнăшсене халех тӳрлетмеле.

Районри çулĕр пайĕ çулĕр строителстви планне колхозсем патне сӳтсе ĕçлайăх пуçарнă. Планра кашни йăлсоветĕн, колхозăн задачисене уйрăмăн кăтартса панă. Анчах ку ĕçе тĕ вĕçлеле сӳтермен. Чылай йăлсоветсене плана пухусенче сӳтсе-явмаи.

Районăн кайа йăлса пырассине кĕске вăхăтрах пĕтермеле кирлĕ условисем пур. Камсене курса ĕçлемели, камсеме тăнлаштармали тĕслĕхсем те сахал мар. Хыçкассинчи колхоз строителстваă сезонне лайăх хатĕрленме тăрăшаç. Кивсуткассинчи колхозăн Григорйев йăтăлнă ĕçтресене туса пыракан çулĕр бригадин халех çулсем хĕрĕнне пыя йăхмали канавсене уçса хатĕрлет. Çул-йĕр бригадирĕсем мартăн 14-мĕшĕнче пулса иртнĕ канашлăвĕнче Нĕкĕсери колхозăн бригадирĕ Исайев йăтăлнă Иванов бригадине, Григорйев йăтăлнă „Малала" колхоз бригадирне социалисăмла ăмăртăва чĕнчĕ. Ăмăртакансем хăйсем умне сезона пур ĕнчен те хатĕрленипе кĕрес задачă лартнă. Райĕçтăвкомăн, районри çулĕр пайĕн ку пусарăва пур бригадăсем, колхозсем, йăлсоветсем хушшине сарассипĕн пысăк тимлĕхпе ĕçлемелле.

Райĕçтăвкомăн çулĕр пайĕ çине ытларах çавăрăнса пăхмала. Пĕтĕм ĕçе çулĕр пайĕнче ĕçлекен çĕнĕ кадресем вĕрентесе, пулăшса пырас май йĕркелемеле.

М. Титов.

Чукунçул строителстви

Панă сăмаха пурнăçлаççĕ

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче Çĕрпӳ районĕнчи „Социалистический путь" колхоз членĕсем пысăк тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ. Колхоз строителствăра ĕçлеме йăтарласах 15 çынтан бригадă организацилене (бригадирĕ В. Григорйев). Бригадă членĕсем пурте хавасла, вĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Ака, К. Семенов, Й. Тимофейева, А. Федорова, М. Иванова, А. Тимофейева йăлташсем кулленех нормана 150 процентран кайа мар тултарса пыраççĕ.

Хăйăхи вăхăтра Григорйев йăлташ бригади лини хывмали çула тасатса уçса пырат.

Решенисем йышăннă,—ĕçĕ çук

Канаш — Шупашкар чукунçул строителствин 8-мĕш участкинче ĕçлекен комсомолецсен йăнвар уйăхĕнче пулса иртнĕ пухуве комитет çекретарне Йăковлева суйласа хăварнăччĕ. Унтанпа икĕ уйăх çитет. Анчах комсомол ĕçĕ йăсании курăмасăт. Пухусем те пулмаççĕ. Рабочком председателĕ Викторов хаçатсем çырăнтарчĕ пулин те, комсомолецсем пĕр номĕр те илмерĕç. Çапла комсомолецсем çĕнĕ хыпарсене пĕлмеççĕ. Каласуçем те туса иртермеççĕ.

Комитета суйлана чухне куçтусласа ĕçе сарса йăрасси çинчен тĕплĕ решени йышăннăччĕ, анчах вăл хут çинче çеç пулчĕ. Комитета ăратмала, ĕçе вăйлатмала.

Л. Максимов.

Геройсен ĕçĕ

Профессор В. Й. Визе

И. Д. Папанин, П. П. Ширшов, Е. Т. Кренкел, Й. К. Федоров калама çук пысăк ĕç турĕç, вăл ĕç мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине çак пама та йăвăр. Папанинщăсем ăслăлăхпа пирĕн планетăн халиччен тĕнчесе вĕрентмен йăлтах çĕнĕ обласне уçса пачĕç.

„Çурçĕр полюсĕ" станцинче хĕлхăскакансем хăйсем уçса иртнĕ кăшши вăтăр миҫ хыççăн океан тăрăнăшне виҫсе пына. Ку ĕçе вĕсем пермайăх туса пына. Çакна туни ĕнтĕ Полюр бассейнĕн тĕпĕн релйефне çĕнĕрен, тĕрĕсрехĕн чухласа курса тăма май парат. Папанинщăсем тĕрлĕ тăрăнăшри шывăн температурипе, тăваррăлĕ мĕнле иккенне çăнаса пĕлни калама çук пысăк вырăн-йышăнса тăрат. Вĕсен çăнавĕсене Çурçĕрти пăрлă океанăн кăнтăр йĕнне лерех широтисем çинчен калакан çăнавсен результатăчĕсемне танлаштарса пăхса, халь ĕнтĕ учонайсем Полюр бассейнне Атлантика океанĕнчен йухса кĕрекен шывсен тĕп йăхăмĕ пирки кирлĕ пек сӳтсе-явма пултараççĕ.

Пăр татăкĕ хăçан мĕнле вырăнта пулни çинчен, станци таврашĕнче вĕрсе тăнă çилсем çинчен калакан сведенисем çăкна кăтартса параççĕ: пăрсем Çурçĕр полюсĕ патĕнчен кăнтăрала Гренланди тинесне кĕриччен пĕтĕмшлĕн кусса пыни икĕ вăй—çил тата йăхăм вăйĕ хăваланипе пулса пынă. Çак çăнавсемпе пăра кусса пымашкăн пĕртăнах пулăннă. Çил вĕрнине пула пăр талăкра пĕрер миҫ малала кусна, шывăн йăланахи йăхăмне пула—пĕрер миҫ кусса пына. Пăр полюр бассейнĕнче хăйĕн теп çулĕне кусса пынин пĕтĕмшлĕх хăвартăлăхĕ вăтам шутпа талăкне 2 миҫ пулнă.

Папанин лагерĕ çăнаса пĕлнисем çакна кăтартса параççĕ: çулти шыв сийесемпе пăрсем Çурçĕр полюсĕ патĕнчен Гренландипе Шпицберген хушшинчи анлă проход (икĕ çыран хушшипе иртмели вырăн) патнеле кусса пыраççĕ.

Папанинщăсен пăрĕ Гренланди çыранĕсен хĕррипе кусса пыни Хĕвелтухăç Гренланди йăхăмĕн режимĕ çинчен епĕр мĕн пĕлнине чылай туллидетсе пачĕ. Папанинщăсен çăкна çирĕплетсе пачĕç: Хĕвелтухăç Гренланди йăхăмĕн—тĕпрен илсен хăй тĕллĕн йăхăкан йăхăм, çил вĕрниччен килекен йăхăм. „Çурçĕр полюсĕ" станцин ĕçĕ çăкна кăтартса парат: Хĕвелтухăç Гренланди йăхăмĕн хĕлахи режимĕ çуллахинчен чылай; палăрмалах урăхла. Хĕллехи вăхăтра çил вăйĕ пăрсене кăнтăрала кусса пыма пулăшасси вăйлăланат.

Папанинщăсем тунă ĕçе пула халь ĕнтĕ епĕр Çурçĕрти пăрлă океан пăрĕсен балансне тĕплĕн курса тăратпăр. Ана çăнавсемне çирĕплетнĕ. Ку ĕнтĕ асăлăхшăн кăна мар, практикăлă ĕçшĕн те калама çук хаклă çăнав. Пирĕн Арктикăри ăшăх шывлă тинĕсенчи пăрсем уйăралса тăмаççĕ. Полюр бассейнинчи пăрсемпе пĕрле вĕсем пĕррелĕ, пĕрпĕринпе çыхăнса тăраканах массăн пулса тăраçĕ. Çурçĕр тинĕс çулне алла илес тĕлĕшпе ĕçлесе, вăл массивăн уйрăм пайне çăнаса вĕренсе пынă вăхăтра вăл массива пĕтĕмшлĕх пĕлмесен, учонăйсем хăйсен ĕçне кирлĕ пек лайăх тума пултарайманччĕ. Çурçĕр тинĕс çулĕн навигацийĕ вальăн пăрсене прогноз тунине кирлĕ, унсăр май килмест. Анчах Полюр бассейнне лайăх пĕлмесен ун пек прогноçсем кирлĕ пек çирĕп никĕслĕ пулмаçĕç. Çавăнпа та кусса çӳрекен пăр çинче хĕлкаçакан хăйăлă паттăрсем тунă ĕç—Совет çĕршывĕн Арктикăра пурнăçа кĕртмели тĕп задачипе тачă çыхăнса тăракан ĕç пулса тăрат. Ку çаплах пулмала пулнă та ĕнтĕ.

Папанинщăсен мĕтеорологилĕ çăнавĕсем калама çук пысăк выраи йышăнса тăраççĕ. 4-хăйăлă паттăрсем тунă ĕç—Совет çĕршывĕн Арктикăра пурнăçа кĕртмели тĕп задачипе тачă çыхăнса тăракан ĕç пулса тăрат. Ку çаплах пулмала пулнă та ĕнтĕ.

Папанинщăсен мĕтеорологилĕ çăнавĕсем калама çук пысăк выраи йышăнса тăраççĕ. 4-хăйăлă паттăрсем тунă ĕç—Совет çĕршывĕн Арктикăра пурнăçа кĕртмели тĕп задачипе тачă çыхăнса тăракан ĕç пулса тăрат. Ку çаплах пулмала пулнă та ĕнтĕ.

„Çурçĕр полюсĕ" станцинче сывлăш температурине пĕрмайах çăнаса вĕренинн резултăчĕсем çăкна кăтартса пачĕç: çĕр чăмăрĕн çурçĕр полушариче, тропиксенчен çурçĕр ĕнне лле, йăлашки икĕ вуна çул хушшинче çанталăк пĕтĕмĕшлĕн йăшăнса пыни центртри Арктикăна та çаваpса илнĕ.

П. П. Ширшован гидробиологилĕ çăнавĕсем ăслăлăхшăн пит пысăк, хаклă йăпала пулса тăраççĕ. Вĕсем пире центртри Полюр бассейнни халиччен çăнаса вĕренмен чĕрчунсен пурнăçĕн тĕнчине уçса параççĕ.

Й. К. Федоров туса иртнĕ геомагнитлă ĕçсем теори тĕлĕшĕнчен те, практикă тĕлĕшĕнчен те калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Трансарктикăла сывлăш магистральне алла илес ĕçре вĕсем пит кирлĕ те пысăк усă кӳме тивĕç.

Папанинщăсен халиччен иҫта пулман опычĕпе совет ăслăлăхĕ кĕске вăхăтрах усă курĕ, кун пирки нимĕн иккĕленмели те çук. Арктикă центрĕнче кусса çӳрекен çĕнĕ станцисем сикес тухеç, вĕсем пире „етем пырса кĕрĕми полюсăн" (çурçĕр широтин 83 градусĕпе 50 минуче, хĕвеланăç долготин 160 градусĕ) шура пăнчисене тĕпчесе вĕрнисе пареç. Вăя станцисем Арктикăн йăлашки çекречĕсене уçса парĕç.

Папанинщăсене—ăслăлăхри хастарлă совет çынниссне чыс та мухтав! Сталин панă хисеплĕ те йăвăр заданине вĕсем вĕçне çитийех пурнăçа кĕртрĕç, пĕтĕм халăх умĕнче хисепле, чыса тивĕçле пулчĕç.

Полъшăпа Литва хушшинчи хирĕçӳ

Литва агентстви пĕлтерĕ тăрăх, мартăн 12-мĕшĕнче Литва полицийĕсем Полъшăпа Литва чиккинчи Улутус районĕнче пăшал пенине илтнĕ. Вĕсем, пăшал пенĕ вырăна кайнă та Полъшă салтакĕсемпе курнă, вĕсенчен пĕри, Литва территорийĕ çинче пулнă. Асăрхаттарнине хирĕç полъак винтовкăран пенĕ. Литва полицийĕ те хирĕç персе, Литва йĕнчи чиккĕрен çирĕм метрта ӳкнĕ полъак салтакпа йывăр аманнă. Аманнă салтак сăвăнтах вилсе кайнă.

Çак инцидент, Литвана хирĕç Полъшăри шухăшсене çивĕччĕн хирĕçтерсе йăнă çăлтăр пулса тăнă. Полъшă Литва çине питех те чăрсăрланса пăхма пуçланă.

Полъшăпа Литва хушшинчи хирĕçӳ çинчен „Правда" çапла çырать:

„Бекăн тулашри политикла меточĕсем тахçанах агрессорсен лагерĕнчи пысăк тискер кайăксен вăрăхурахла ĕçĕсем йĕвĕрлĕ тарçăла туса пынă пулнă. Бек хăйĕн маневрĕпе ку вăхăтчен чи малтан Германи йĕвĕрлĕ пулса пынă пулсан хаç Полъшă, Литва пирки Йапони военничиниç хайăр чей-лĕхĕн тĕслĕхне шутласа илчĕ Полъшă йĕнчен, Полъшăпа Литва чиккинче инцидент туса илнĕ пулнă, кĕçех ку инцидентпа Литва çине ӳçăнах провокацилĕ хĕссе тапăнма Полъшă усă курнă.

Пурте программа тăрăх пулса пырать. Полъшă салтакĕсем Литва территорийĕнче çине кăçаççĕ те çак майпа инцидент пуслаçать.

Инцидентăн Полъшăри организатор'сем, айăпа Полъшăн чикĕри хурал-йĕнчен пулнă тесе йышăнаççĕ, çавах та вĕсем „кӳрентернĕ йĕнĕ" йĕвĕрлĕ пулса тăраççĕ. Вĕсем Литва йĕнчен пĕрлешӳлĕ комисси тăвас пирки пулнă предложенине йышăнмаççĕ, хирĕçӳве çивечлетме тем те пĕр тăваççĕ. Варшавра тата ытти хулисенче приказ тăрăх организацилене Литвана туртса илес тесе ӳçăнах ыйтнипе пулса иртнĕ шовинисăмла демонстрацисем, Полъшăри военничиниç Хĕвелтухăç Йевропăра вăрçа уйăнки атмосферăна тума шухăшланнине çеç кăтартса параççĕ. Литва пирки пулнă Полъшăн провокацийĕ агрессорсен пĕрлĕхлĕ планĕн пайĕ пулса тăрать тесе шутланни питĕ те тĕрĕç. Англи правительстви пуçлăхĕ договорсене пăснине, тата „пулнă фактсен" политикине хăпăлланине пĕлсе илнипе, агрессорсен блокĕ Испанине çĕнĕ пысăк вăйсем йăвĕ, фашисла Германи Австрине туртса илчĕ, Полъшăна Хĕвелтухăç Йевропăра Полъшăпа Литва хирĕçӳне пуçарса йăрса вăрçă пуçлас роль панă. Хальхи вăхăтра татса пама йăвăр, агрессорсене пулăшнă пирки Полъшăна территори тĕлĕнше компенсаци парас пирки сăмах пырат-и, ĕле хальхи вăхăтра Полъшăна хирĕçӳ пуçарса йама хушнă, агрессорсем хăйсем куçи хыççăн мĕн пулассине шухăшлаçа пăхман-ха.

Мĕнле пулсан та, Варшавăна Берлинран пĕлтернисем, Полъшăн провокацийĕ пирки пулса пыракан лару-тăрупе пысăк тревогă çинчен калаççĕ".



ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Республикăда Испани çарĕнчи боецсем фашиссем сĕмĕрнĕ кĕпере йыçăççĕ.

(Сойузфото).

Йапони çарĕсене хирĕç çапăçакан партизансен отрйачĕсем

„Интернешион ен Пресс корресподенс" ятлă журнал Китайра—Йапони туртса илнĕ çĕрте партизансен йăхăмĕ сарăлса пыни çинчен статйа пичетлесе, кăларнă. Статйа авторĕ партизансен йăхăмĕ анлăн сарăлса пынине кăтартакан çĕнĕ фактсене чылай пĕлтерет.

Çурçĕр Китайăн партизансен йăхăмĕ Йапони захватчикĕсене пĕрре те канăç памасăр, тесе çырать журнал.

Йапони çарĕсем Хебей, Чахар, Суйуань, Шаньси, Хенань, Шаньдун провинцисенче туртса илнĕ районсенче 400 пин ытла салтак тытса тăраççĕ. Кунсăр пуçне Цяйаси, Чжецзйан, Аньхуей провинцисенче туртса илнĕ районсенче 300 пин салтака йăхăн. Мĕнпĕн? Мĕнпĕн тесен, Китай партизанĕсем йапончăсем çине пĕрмайăх тапăнçăç, вĕсен отрйачĕсене сĕмĕреççĕ.

Йапони çарĕсем Шаньси, Чахар тата Хебей провинцисене партизансен отрйачĕсенчен тасатас тĕллĕпе темиçе хутчен те хăтланса пăхнă. Çавна тума 1937 çулти декабрĕрте те хăтланса пăхнă пулнă. Партизансене çав провинцисенчен пĕрмайăх тарăнçăç, йапончăсем 50 пин çын ытларах çар йăнă, çарĕсене саймоҫотсем, танксем, артиллери нумай тăнă. Анчах та, Йапони çарĕ хăй умне çăрлă задачăна пуринпе пĕртăк мар, партизансене çав провинцисенчен хăвалаçа кăларма хăтланнă вăхăтра Китайăн 8-мĕш революцилĕ халăх çарĕ йапончăсене нумай сĕмĕрсе пĕтернĕ.

Мынтогурра (Бейпин хулинчен хĕвелăнăç йĕнеле) Англи аллинче тăракан кăмăл-кăлараканпа вырăнсен районĕнче, партизансен пысăк отрйачĕсем çапăçаççĕ, çав отрйадсене Цжао Тун йертсе пырать. Вăл Йапони Китай çине тапăнничченех нумай сул хушши Маньчжурири партизансен йăхăмне йертсе пынă. Вăрçа пуçланă чухне вăл кăмăл-кăлараç-çĕрпе ĕçлекен рабочисенпе, сывăхри йăлсенпи хресченсенчен, Бейпин хулинчи студентсенчен партизансен отрйадне организацинене. Малтанхи вăхăтра унăн отрйадĕнче 2 пин боец пулнă, халĕ 6 пине çитиччен ӳснĕ.

„Западные холмы" текен районра(Бейпин сывăхĕнче). Бейпинри университет профессорĕ пулнă Йан Чжоу-лиць 2 пин çынтан партизансен отрйачĕ организацинене.

Партизансен çав икĕ отрйачĕ йапончăсене кăнлĕх памаççĕ. Йапони çарĕн командованийĕ партизансен отрйачĕсене хи-

—o*o—

Çуралакансем нумай

ВĂРМАР Колхозниксен пурнăçĕ куллен кун пуйăнланса тата куç-туранса пырать. Çав майпа çуралакансен хисепĕ те ӳсет. Çапла Кив Шулхан йăлăнче 1937 султан пусласа 50 ача çуралнă. Вĕсенчен иккĕшĕ çеç вилнĕ.

М. Галкин.

Критикăпа библиографи

Çаксем анчах-ши?

Çак кăçалхи февральте Чăвашлăхлă Ленинпа Сталин çинчен çырнă йӳрăсемпе сăвăсен сборникне пичетлесе кăларчĕ. Сборникре виçĕ пай: 1) „Сталин йӳтлăна чăваш халăхĕнчен" (Чăваш халăхĕ Сталин йӳтлăн патне йăнă çыру), 2) Чăваш поечĕсем Ленинпа Сталин çинчен çырнă сăвăсем, пĕтĕмпе—16 сăвă, сыраканчем—И. Шелепи, С. Елкер, Уйăн Мишши, Пастер Пайгас, Иван Иванк тата Усăн Васлейĕ; 3) Ленинпа, Сталин çинчен хăнăх халăх йӳрринсем, пĕтĕмпе—7 йӳрĕ.

Кĕнекене пăхса тухатăн та, пĕрĕçĕрех: Ленинпа Сталин çинчен çырнă йӳрăсемпе сăвăсем пирĕн çакăнчах-ши? Терĕп. Чăвашсен Ленинпа Сталин çинчен çырнă йӳрăсемпе сăвăсем пĕтĕмпе те 23 къна тесе никам та калас çук, никам та пирĕн поетсенчен çав сăлтăк асăннă 6 поет къна Ленинпа Сталин çинчен çырнă темшне ĕнеппе-çук. Анчах сборник тăрăх çавăн пек тухать. Сборник хатĕрленнисем çак сăвăсемĕр пуçне урах нимĕн те тупăнман. Сборникре хатĕрленнисем, чĕн-чăн сăвăсенпе суйласа илнĕ, ун пайăх сăвăсем тесе калăç. Çук, ку та ăнеçмоли йăнăлах, мар, мĕншĕн тесен „сборникри сăвăсем хăйсен пахалăхĕпе пурте сăлтăр тăраççĕ" тесе калама çук.Çапах та хăшпĕр сăвăсен антарĕсем-мухтанма та хатĕр. Сăмахран, „Ямĕрсен ямĕрĕ" сăвă антарĕ, Уйăн Мишши те (хăй пур тет пулин те) темĕнпĕн çавăн пек йӳрăсем сырайăмарĕ-ха.

Уйăн Мишши йӳлашки вăхăтра сăвăвсенче чĕлхе тĕлĕшĕнчен йăнăх мар пымăрпе те тĕлпулаканçĕ. „Йӳрăçа хурăпа епĕр хаç хурçăлăнă чух", —тенĕ „çулăл сӳ" йышши сăмахсăнăрăшĕ пулать.

Ку калама çук тĕрĕс. пит те лайăх. „Пиç илттăн"—пăт мĕне хак парат халăх Анчах сборникре хатĕрленнисем халăх йӳрринсенчен пур лайăх йӳрăсене суйласа илеймен. Вĕсем халăх поетсем сыринсенчен те лайăх сăвăсенех кĕртмен (сăмахран, П. Васçинка т. ыт. сыринсене пачах та кĕртмен). Ленинпа Сталин çинчен çырнă сăвăсемпе йӳрăсен сборникне тулăпех те сарăлакарах тумалă пулнă.

Йулашшинчен, тата сакна асăпмасăр иртме çук. Темшĕн, теме пула сборник çине „чăвашсен-йĕлăлăхĕнче тĕнчен куçтăвăй инстйтучĕ" маркине лартса йăнă. Вăл ни умĕнмех пекки çырман, ни асăхтаттарсем паман. Пĕ кĕнеке çине маркă лартни те, вĕсен шучĕне, „йĕлăлăхĕнче тĕнчен" ĕçĕ пулать?

Д.

—o*o—

П. И. Чайковский çурални çĕр çул тултарнине уйăвласа иртерме хатĕрленеççĕ

Ленинградри музыка организацийĕсем вырăссен асламе композиторĕ Петр Ильич Чайковский çуралнăранпа çĕр çул тултарнине уйăвлама хатĕрленеççĕ. Уйăх 1940 çула тулать. Организацисен представителĕсемпе пулнă совещăнни çын уйăрса П. И. Чайковский творчествин вунă кунăлăхне туса иртерме йышăннă. Вунакунлăх репертуарне Чайковскийĕн пур опĕремсем те кĕреççĕ, вĕсемпе пĕрлех театрсенче пулнă вăхăт хушши лартман—„Опричник", „Чародейка", „Черевички", „Орлеанская дева" „Иоланда" опĕрăсем те пуласçĕ. Филармонине Консерватори асламе композитор пултарулăхĕн вечĕрсене иртерессĕ. Изогизпа Музгиз „Чайковский тата унăн йӳлатăшсем", „Чайковскийĕн çыравĕсем", „Чайковский живописре" ятлă кĕнекесем пичетлесе кăларасçĕ. Унпа пĕрлех Чайковскийĕн тĕплен çырнă биографине, тата унăн пултарулăхĕ çинчен çырнă кĕнекесем кăларма палăртнă.

(„Ленинградская Правда" хаçатран.)

Çичĕ республикăн спортсменĕсен тĕлпулувĕ

Чăвашсен йĕлтĕрçисем пĕрремĕш вырăн йышăннă

Удмурт республикĕн столицине, Ижевскра,—Тутар, Удмурт, Чăваш, Башкир, Коми, Мордва тата Мари республикисен спортсмен-йĕлтĕрçисен, конькипе йăрăнакансен ăмăртăвĕ пулса иртрĕ.

Малтанхи кун пулса иртнĕ ăмăртура чăваш команди иккĕмĕш вырăн йышăннă.

Хĕрарăм-йĕлтĕрçесен чупувĕнче пилĕк километр хушăна 25 минут та 19 секундăра туха чăваш командинчен Мария Гушкина пĕрреххĕш вырăн йышăннă. Чăваш командинченех Самойлова вăл хушăна 25 минут та 56 секундăра туха тăхăрĕмĕш вырăн йышăннă. Арçыпсен йĕлтĕрăç чупувĕнче чăваш командинчен Г. Иванов 10 километр хушăна 45 минут та 09 секундăра туха тăваттăмĕш вырăн йышăннă. Бурашников вăл хушăна 45 минут та 27 секундăра, В. Васильев 49 минут та 34 секундăра тухнă.

Ăмăртăн иккĕмĕш кунĕнче арçыпсен тата хĕрарăмсен йĕлтĕрăç чупувĕсем пулса иртнĕ.

Арçыпсем вăл кун тата 20 километр хушăна йĕлтĕрне чупнă. Вăл хушăна чăваш представителĕ Бурашников никамран та кĕске вăхăтра—1 сехет те 30 минут та 04 секундăра тухнă. Г. Иванов вăл хушăна 1 сехет те 35 минут та 21 секундăра туса вуннăмĕш вырăн, Васильев 1 сехет те 36 минут та 59 секундăра туха вуниккĕмĕш вырăн йышăннă.

Хĕрарăмсем хушшинчи йĕлтĕрăç чупура 10 километр тăрăшнă Марина Гушчина 52 минут та 12 секундăра туха пĕрремĕш вырăн йышăннă. Самойлова вăл хушăна 56 минут та 45 секундăра тухнă.

Ăмăртăнăн иккĕмĕш кунĕ хыççăн чăваш йĕлтĕрçисен команди малти вырăнта пырать. Йĕлтĕрăç чупу естафетине чăваш йĕлтĕрçисем выляса илнĕ. Йĕлтĕрăç чупăнă пĕтĕмĕшĕ пĕрремĕш вырăнпа чăваш спортсменĕсенче йунăç. Чăваш йĕлтĕрçисен Ижевскран Свердловска йĕлтĕрĕпе чупассине Пĕтĕм Сойуза малти вырăна тухассишĕн пулакан ăмăртува кайăççĕ.

Ялăх приговорне пурнăçа кĕртнишĕн хĕпĕртетпĕр

ШЕМШЕР (Шупашкар р.). Радио тăрăх ССР Сойузĕн Верховнăй Суйĕн Коллегийĕ совета хирĕçле ыйтăмлă-тропăсила блокра тăна, бандитсем пирки йышăннă приговора пурнăçа кĕртнишĕн çивĕч пĕлтерĕçĕ. Намăслатпă пилĕчĕн колхозникĕсем сăн ирĕçĕ ӳтăнăçкĕне, фашисла шпионсене, провокаторсене, диверсантсене, сăтăрçăсене—Бухарина, Рыкова, Иродана тата ыттисене те, етем питне сухатăнăçкĕрсене, перçе пăрахăн çинчен пилесен, совет суйĕн калама çук тĕрĕç приговорне тата тепĕр хут ырлараç.

ССР Сойузĕнчи 170 мĕлйунăк халăх кăмăлне палăртса тăракан приговор пурнăçа кĕчĕ. Халăх тăшманĕсене сивĕччĕн тытса тăрă пыш çине кăларшăн Сталинпа халăх комиссарĕ Йежов йӳлатăн-йĕртне пыракан совет разведчикĕсене чĕререн саламлатпăр.

К. Наманган.

КĔСКЕН

✪ **Иккĕмĕш похода хатĕрленеççĕ.** Тăвăрри (Ишлей р.) вăтам шкулта пĕренекенсем ГТО, ПВХО, ГСО значокĕсем пама тытăнчĕç. Хĕрăç Çарпа Хĕрлĕ Флот умĕнче кунĕчĕ вунă сухăм хушăна йĕлтĕрăç поход туса иртерĕç. Йĕлтĕрçе пайăхсенчен 9 çын ГТО значокĕн йĕлтĕрçе памали нормине панĕç.

Халĕ иккĕмĕш похода хатĕрленеççĕ.

Тимофейев.

✪ **Виçшер значок.** Тури Пăнкăн йăлĕнчи (Елĕк р.) колхозникниçем—К. Абрамов, Н. Игнатйев тата В. Кĭриллов й-м кашнийĕх виçшер оборонă значокĕ илнĕç. Вĕсем Ворошилов ячĕ тĕл пекех, сывăлăпăра химилĕ тапăнăсченчен сыхланма тата малтанхи пухăшу пама пĕлеççĕ. Вăл тĕлĕпше вĕсен кашнинех ВС, ГСО тата ПВХО значокĕсем пур.

А. Лукин.

★**Сасăлă кино.** Йĕлтĕç клубĕнче сасăлă кино ĕçлеме пуçларĕ. Ун малтан—„Мы из Кронштадта" тата „На Дальнем Востоке" йăтăлă сасăлă фильмсем кăтартарĕç. Вăл фильмсене 1.016 çын пырса курчĕç.

Купташкин.

✪ **Шкулти шахмăт турнирĕ.** Çак кунсенче Тракăри вăтам шкулта шахмăтăла выляракансен турнирĕ пуласа иртрĕ. Турнирта пĕрремĕш вырăна П. Чернов, иккĕмĕш вырăна С. Константинов, виççĕмĕш вырăна П. Петухова И. Кузьмин туртăç-ретнет.

✪ **Колхоз клубĕ.** Мăн Йĕкăтри (Йĕтĕрне р.) „Хĕрлĕ Октябрь" колхоз çĕнĕ клубне хăпăртлă ĕçлеме пуçланă. Ун малтан—„Мы из Кронштадта" тата „На Дальнем Востоке" йăтăлă сасăлă фильмсем кăтартарĕç. Вăл фильмсене 1.016 çын пырса курчĕç.

Купташкин.

Вăрçăлă турăсăрсен Сойузĕн республикăри 5-мĕш сĕвĕçĕ

Мартăн 15—17-мĕш кунĕсенче республикăри вăрçăлă турăсăрсен Сойузĕн 5-мĕш сĕвĕçĕ пулса иртрĕ. Сĕвĕç вăрçăлă турăсăрсен Сойузĕн республикăри Совечĕн отчотлă докладне итлерĕç.

4-мĕш сĕвĕç 1934 çулта пулса иртнĕ. Çав сĕвĕçра вăрçăлă турăсăрсен Чăваш Советне тăшманла çынсем Куйбышовпа Кузнецов кĕрсе кайнă. Вĕсем тĕн сĕрĕмĕпе кĕрешессине чăмантарса пынă.

Куйбышов тăшманла кĕнеке редакцилесе кăларнă. Вырăнсенчи йăчейкăсенче çав кĕнекепе усă курса, нумай сийен кӳнĕ. Вĕсемех республикăри колхозсемпе организацисенчен „тĕнче кĕрешмели литературăпа илме" тесе пухнă укçа-тенкĕне хăйсен çумне чикнĕ.

Çавăн пекех Елĕк, Шăмăршă, Пăрачкав райсоветĕсенче те халăх тăшманĕсем ларса тĕнче кĕрешесе ĕçе йăлтах йухăнтарса йăнă.

Тĕн сĕрĕмпе кĕрешес ĕçре партисе комсомол организацисен ПСК(б)П Тепкомĕн 1937 çулти февральпе март уйăхĕнчи Пленумĕ хыççăн чылай улшăну тунă.

1937 çулта республикĕнче 749 йăчейкă организацилене, члена 16487 çынна илнĕ.

Вăрнар, Шăмăршă, Куçлавкка районĕсенчи вăрçăлă турăсăрсен Совечĕсем ĕçе тĕрĕс организацилеççĕ. Пысăк çитĕнӳсем тунă. Ку районсенче тĕн сĕрĕмпе кĕрешес ĕçе парти, комсомол, профсоюз активне мобилизацилене. Йăчейкăпа йăчейкă пĕр пĕринне ăмăртса ĕçлесçĕ. Ĕç планĕсем тунă.

Аннăч республикри вăрçăлă турăсăрсен Совечĕн председателĕ Кочанов йӳлатăн хăйĕн отчотлă докладненче лайăх ĕçлекен йăчейкăсене, принципăл ĕçлекен çынсене тĕплĕ кăтартса паракарĕ.

Сĕвĕç делегачĕсем тĕн сĕрĕмпе хирĕç чăвăш, тутар чĕлхисемпе çырнă кĕнекесем çитĕнтерĕççĕр çинчен чарăнса тăнĕç. Республикăри „Чăваш Коммунĕ", „Красная Чувашия", „Колхозник ялавĕ" хаçатсем тĕн сĕрĕмĕн сийенлĕхĕ çинчен пачăр çутатса пынине хыттă критиклерĕç.

Сĕвĕç тĕн сийенĕ çинчен ĕçсӳнисенне ăнлантарса пама вăрçăлă турăсăрсен республикăри тата районри Совечĕсене лектăрсен группине организацилене хушса хăварчĕç.

Сĕмĕрле комбинатĕнчи партком рабочисем хушшинче, тĕне хирĕç ĕçе организацилемен. Рабочисем хушшинче массăлă ăнлантарулă ĕç çук. Кунта пупсем хăшпĕр рабочисене тĕн сĕрĕмпе ултăласа пурăнаççĕ. Унти пур пĕр кун хушшинче ĕç ачана тĕне кĕртнĕ. Пупсем вăрттăн тăшманла ĕçсем туса пыраççĕ. Сисемлĕхе ӳхатнă чылай ответлă ĕçри çынсенех хăйсем йĕнне çăвăрса усă курассĕç. Елĕк районĕнчи Асакассинчи Çиротин пуп учителĕсене пухса ĕçкĕ организацилене те пулнă. Ĕçкĕре СССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйламалли кандидатсенĕ хирĕç елек сарма пикеннĕ.

Кăмăкассинчи (Тутаркас р.) „Хĕрлĕ çăлтăр" колхозри Алихметкина колхозница сывмар пулсан, тĕн сынпиçсем: „вĕри çĕлен йĕрне" тесе сăмах сарнă. Алихметкинă колхозницăна йăлти хăшпĕр сынсем боҫҫницана кайма хушман. Вилме пытане çитсен боҫҫницана илсе кайнă, боҫҫницăра йăна врачсем хăвăртах сыватнă.

Вăрçăлă турăсăрсен республикăри сĕвĕçĕне СССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутачĕ—ПСК(б) Парти Обкомĕн секретарĕ Г. И. Иванов йӳлташ сăмах тухса калаçăç.

Мордва республикинчи вăрçăлă турăсăрсен Советне социализăмла ăмăртăва чĕнчĕ.

Мартăн 17-мĕшĕнче хуппăн (вăрттăн) сасăласа вăрçăлă турăсăрсен Чăваш Совечĕн пленумне 35 çын суйласа, хăварчĕ.

Çав кунах вăрçăлă турăсăрсен Совечĕн 1-мĕш пленумĕ пулчĕ. Пленум президиумĕ членĕсене—9 çынтан суйланă. Вăрçăлă турăсăрсен республикăри Совечĕн председателĕ пулма пĕр сасăлăн П. И. Аникин йӳлташа, ответлă секретар пулма А. С. Сĕменов йӳлташа суйланă.

М. Исайев.

Ответлă редактор Н. М. СЕМЕНОВ.

Академи театрĕнче

Мартăн 20-мĕшĕнче Чăвашла спектакль

Н. Островскийăн романĕ тăрăх

„Хурçă йĕпле хĕрнĕ"

(4 пайлă)

К. И. ИВАНОВ лартать.

Художникĕ Йе. Н. САПОЖНИКОВ.

Талон № 142. Абонемент № 9

талон № 4.

АНОНС! П. Н. Осипов

АЙДАР

Рахманов

ПРОФЕССОР ПОЛЕЖАЕВ

лартма хатĕрленеççĕ.

ПУÇЛАМĔШПЕ ВĂТАМ ШКУЛТА ĔÇЛЕКЕНСЕН ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ КОМИТЕЧĔН ШУПАШКАРТИ КАНМАЛИ ÇУРЧĔ

(Ăтăл лешĕнчи пĕркунăйăх канмали сурт)

1938 çулхи май, çĕнтăвăр тата октябĕр уйăхĕсенче канма

12 кунлăх путовкăсем сутать.

Çемĕелĕ çынсене ваçăр, çайвакă тăрах, уйăрăм пулĕмсем пур, (2, 3, 4 çынна ваçăр). 8 çула çитмен ачасене йышăнмаççĕ.

Çайвакăсене кăçалхи мартăн 25-мĕшĕнчен çеç Сойузсен çуртне 1-мĕш пулĕм (Шупашкар) Канмали çурт дирекцинне памала. Мартăн 25-мĕшĕ иртсен çайвакăсене йышăнмаççĕ.

„Чăваш Коммунĕ" сыпăнса илмелли хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха 15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Аялăрăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 139 Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста Заказ № 197 Тираж 15.665 25—94 м. п. 1—1 п. л.